***Михайлова Светлана Геннадиевна***
учитель
МБОУ «СОШ №54»
г. Чебоксары, Чувашская Республика

# ФЕСТИВАЛЬ ЧУВАШСКОЙ КУЛЬТУРЫ «ÇУРХИ ХАВАСЛĂХ»

***Аннотация**: в статье представлена методическая разработка, предназначенная для проведения фестиваля чувашкой культуры. Мероприятие проводится с целью популяризации фольклорного движения, сохранения и развития национальных традиций.*

***Ключевые слова**: фестиваль, национальные традиции, духовно-нравственные ценности.*

*Введение*.

Фестиваль проводится в целях сохранения и укрепления традиций, культуры чувашского народа и популяризации народного творчества. Важно сформировать у детей и подростков интерес к национальной культуре и традициям чувашского народа посредством возрождения утраченных ценностей, погружения в истоки национальной культуры. Без знания народных традиций и обрядов невозможно полноценное воспитание молодого поколения.

Сценарий Фестиваля предназначен для учеников младших и средних классов, учителей начальных и средних классов, учителей чувашского языка и литературы, КРК, музыки и родителей.

*Основной целью* фестиваля является формирование у детей и юношества социально-ценностного отношения к чувашской культуре, чувства национального самосознания, нравственности и патриотизма, толерантности в современных условиях.

*Задачи*:

– сохранение и развитие чувашского языка и культуры через творчество и проектно-исследовательскую деятельность;

– поддержка творческого потенциала исполнителей;



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

– повышение творческого уровня исполнителей;

– приобщение к национальной культуре, обычаям и традициям родного народа, к его духовно-нравственным ценностям.

*Актуальность работы* заключается в том, что новая модель образования предполагает освоение обучающимися в процессе получения базового образования в рамках стандарта инновационного поведения, что означает развитие востребованных сегодня и в будущем творческих способностей и умений добывать и применять знания, инициативности и ответственности.

*Участники*: в фестивале принимают участие учащиеся 2–9 классов общеобразовательной школы, воспитанники музыкального отделения и учителя чувашского языка, КРК, музыки, изобразительного искусства и хореографии.

*Форма мероприятия*: интегрированный фестиваль-праздник музыки, хореографии, чувашского языка, КРК.

*Методы*: концертное исполнение песен, танцев, стихотворений, сказок, демонстрация слайдов с подробным комментированием презентации.

«*Çурхи хаваслăх*»

(*Класс тулашĕнче урттермелли уяв сценарий*)




Рис. 1

Залта «Пит хитре-çке çут тĕнче, илĕртет çурхи тĕнче» ятлă ачасен ӳкерчĕкĕсен выставки, «Чăваш тĕнчи тĕрĕллĕ» курăм ĕçĕсем, чăваш тумĕ тăхăннă учительсемпе ачасем. Ятарласа хатĕрленĕ презентаци слайчĕсем. Слай-


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

дри ӳкерчĕксем сăвă-юрă сăмахĕсемпе, ташăсемпе тачă çыхăнса тăраççĕ, пĕр-пĕрин хыççăн килĕшӳллĕн ылмашăнса пыраççĕ.

Уяв шкул ачисем юрлакан Чăваш Республикин гимнĕпе пуçланать.

«*Тăван çĕр-шыв*».

*Кĕвви Г. Лебедевăн.*

*Сăвви И. Тукташăн.*

1. Çурхи тĕнче вăраннă чух,  
Хаваслă кун шăраннă чух,  
Чун савăнать, чĕре сикет,  
Çĕршывăм çинчен юрлас килет.  
Хушса юрламалли:  
Тăван çĕршыв,  
Тăван çĕршыв,  
Асран кайми  
Юратнă çĕршыв.  
Тăван çĕршыв,  
Тăван çĕршыв,  
Мухтав сана,  
Çуралнă çĕршыв!  
2. Яшсем-хĕрсем выляна чух,  
Атте-анне ăс панă чух,  
Чун савăнать, чĕре сикет,  
Татах та нумай пурнас килет.  
Хушса юрламалли: …  
3. Тăвансемпе пĕрлешнĕ чух,  
Чăваш тĕнчи çĕкленнĕ чух,  
Чун савăнать, чĕре сикет,  
Татах та хастар пулас килет.  
Хушса юрламалли: …

Сцена çине ертсе пыракансем тухаççĕ.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*1-мĕш ертсе пыракан:*

Çӳл тӳпе кăвак та аслă.

Сар хĕвеллĕ тӳпере.

Сывă-и çурхи хаваслăх.

Астăватăн-и пире.

«*Çуркунне*» *юрă*.

*Кĕвви Г. Маркияновăн.*

*Сăвви В. Кошкинăн.*

*Вĕренекенсен ушкăнĕ юрлать* (*1-мĕш слайд*).

1. Шăнкăр-шăнкăр сасăпа

Килнĕ тейĕн лашапа.

Çитнĕ пирĕн çурт умне

Уçă чунлă çуркунне.

2. Манăн пĕчĕк шăллăма

Илĕртет вăл урама.

Савăнмалли-кулмалли

Илнĕ-килнĕ ун валли.

3. Савăнăçлă шăнкăрчсем,

Шăратаççĕ юрăсем.

Килĕштернĕ парнене,

Эпир тунă вĕллене.

*1-мĕш сăвă вулакан*:

«*Савнă çĕр*, *Чăваш çĕр-шывĕ*» (*авторĕ П. Хусанкай*) (*2-мĕш слайд*).

Авалтан эпир юратнă

Пархатарлă Атăла,

Ун шывне нумай хумхатнă

Тăвалла-анаталла.

Пирĕн халăх ĕмĕтленнĕ

Кун курасшăн малашне.

Сĕм вăрман пире пилленĕ


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Сиплĕ уçă сывлăшне.

Ĕмĕр хыççăн ĕмĕр иртрĕ,

Шухăш вĕçрĕ аякка.

Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитрĕ,

Пирĕн çул-йĕр сарлака.

Пурăнах эс ĕмĕр сывă

Халăхсен кил-йышĕнче,

Савнă çĕр, Чăваш çĕршывĕ,

Аслă Атăл хĕрринче!

*2-мĕш ертсе пыракан:*

Тăван çĕре упра, юрат,

Тăван çĕре чысла.

Вара сан пурăнма юрать,

Юрла, ташла, ĕçле.

«*Ташă кĕвви*».

*Кĕвви Ф. Лукинăн.*

*Сăвви халăхăн.*

*Вĕренекенсен ушкăнĕ ташлать* (*3-мĕш слайд*).

1. Атьăр ташша пуçлар-и те,

Атьăр ташша пуçлар-и!

Ура тапса ташлар-и те,

Ура тапса ташлар-и!

2. Ма юрлас мар, ташлас мар та.

Ма юрлас мар, ташлас мар.

Савăнăçлă ӳснĕ чух та

Савăнăçлă ӳснĕ чух та.

3. Атьăр ташша пуçлар-и те,

Атьăр ташша пуçлар-и!

Ура хуçса ташлар-и те,

Ура хуçса ташлар-и!



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*1-мĕш ертсе пыракан:*

Пирĕн аслă тĕп хуламăр,

Шурă шĕкĕр Шупашкар.

Курăнатăн эс мăнаçлăн,

Капăр тумлă Шупашкар.

*«Тăван хула» юра.*

*Кĕвви А. Никитинăн.*

*Сăвви В. Давыдов-Анатрин.*

*Вĕренекенсен ушкăнĕ юрлать (4-мĕш слайд).*

1. Атăл тăрăх хăпаратпăр,

Ак, умра, инçех те мар,

Курăнса каять хуламăр -

Пирĕн капăр Шупашкар.

Шупашкар, Шупашкар,

Пирĕн капăр Шупашкар.

Шупашкар, Шупашкар,

Пирĕн капăр Шупашкар.

2. Эс ялан кĕтсе илетĕн

Пире çывăх тăвана,

Сăнупа илем кӳретĕн

Ирĕк аслă Атăла.

Сăнупа, сăнупа,

Илем кӳретĕн Атăла.

Сăнупа, сăнупа,

Илем кӳретĕн Атăла.

Савăнатпăр, тĕлĕнетпĕр,

Эсĕ хăвăрт ӳснинчен.

Сăвă – кĕвĕ кĕвĕлетпĕр,

Шупашкарăмăр çинчен.

Сан çинчен, сан çинчен,


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Шупашкарăм, сан çинчен.

Сан çинчен, сан çинчен,

Шупашкарăм, сан çинчен.

4. Ĕмĕр пул эс пĕр тăванлă

Аслă чаплă Мускавпа.

Пирĕн ĕçлĕ çĕн вай-халлă,

Хăвăрт ӳсекен хула.

Шупашкар, Шупашкар,

Пирĕн капăр Шупашкар.

Шупашкар, Шупашкар,

Пирĕн капăр Шупашкар.

*2-мĕш ертсе пыракан*:

Ташши, ташши, сала кайăк ташши,

Сала кайăк ташши мар,

Хамăр туссен ташши.

«*Тĕрĕçсен ташши*» («*Кружевница*»).

*Кĕвви А. Михайловăн*

*Сăвви Ю. Сергеевăн.*

*«Кружевница» юрра чăвашла куçаракансем: В.А. Трифонова, С.Г. Михайлова.*

*Ачасен пултарулăх ушкăнĕ ташлать* (*5-мĕш слайд*).

1. Йывăр пире танлаштарма,

Кирлĕ сăмахсем тупма.

Пăхса ытармалла мар.

Хитре чăваш тĕррисем.

А-а-а, а-а-а,

Хитре чăваш тĕррисем.

2. Чĕнтĕрлĕ чăваш тĕрри.

Курăнмасть вĕçĕ – хĕрри.

Чăваш тĕрри пит черчен,

Мĕнле асамлă вĕсем!



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

А-а-а, а-а-а,

Мĕнле асамлă вĕсем.

3. Кашни йĕрки çут хĕвел пек,

Хĕм сапрĕ вĕсем çине.

Тавах сире, тĕрĕçсем,

Савăнăç кӳретĕр пире.

А-а-а, а-а-а,

Савăнăç кӳретĕр пире.

*1-мĕш ертсе пыракан*:

Ку мĕн çĕр-шывĕ.

Юмах ен!

Камсен çĕр-шывĕ,

Ачасен!

«*Йăва*» *юмах*. *Выляканĕсем – кĕçĕн класс ачисем* (*6-мĕш слайд*).

*2-мĕш ертсе пыракан*:

Хĕвел шевли вăй вылять,

Çут тĕнчене çутатать.

Ай, юрлар-и юррине

Туйса пурнăç илемне.

«*Савнă Шупашкарăм*» *юрă*.

*Кĕвви Ю. Кудаковăн.*

*Сăвви Ю. Мишшин.*

*Вĕрентӳçĕсен ушкăнĕ юрлать* (*7-мĕш слайд*).

1.Тӳпере хĕвел йăл кулать

Ун ытамĕнче ман хула.

Савнă Шупашкарăм.

Эп сана юратрăм

Пулăн чĕрере ĕмерех.

Хушса юрламалли:

Шупашкар,Шупашкар, Шупашкар


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Пыл шăршиллĕ хитре çăкасар

Маншăн эсĕ чи хаклă хула,

Шупашкар…

2.Çут хĕвел çиçет тӳпере

Сарпике кулли чĕрере

Юнашар ĕçлетпĕр

Çĕн завод çĕклетпĕр

Атăл хĕрринче пур тĕнче.

Хушса юрламалли: …

3.Çăлтăрсем сӳнеç тӳпере

Юрату сӳнмеç чĕрере

Пирĕн пурнăç çулĕ

Ĕмĕр такăр пулĕ

Çирĕп те тату юрату.

Хушса юрламалли: …

*1-мĕш ертсе пыракан*:

Хĕвел хĕртет тӳперен

Йăл-йăл çиссе кунсерен.

Пурте туслă пулăр тет.

Юрла-юрла пурнăр тет.

*2-мĕш ертсе пыракан*: (*8-мĕш слайд*).

Сывă пулăр! Сывă пулăр!

Яланах илемлĕ пулăр!

Яланах хаваслă пулăр!

Яланах телейлĕ пулăр!

*Тепре тĕл пуличчен*!

(Чăваш юррисем янăраççĕ).



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)